Акци

# «Сывă пурнăç йĕрки» – пур çĕрте те



Муркаш районĕнче «Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн» акци пыни çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Районти пур вĕрентӳ тата культура учрежденийĕсенче маларах йышăннă плансемпе тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ. Вĕсен тĕллевĕ – сывă пурнăç йĕрки кашни çыншăн тата çав вăхăтрах обществăшăн та малти вырăнта тăмалла. Унпа пĕрлех хамăрăн тавралăха та «сывă» тытмалли çинчен манмалла мар.

Акци пуçланнăранпах «çавра сĕтелсем», «Тĕпсĕр шăтăка илсе каякан çул» ятпа тӳрĕ калаçусен сехечĕсем библиотекăсемпе шкулсенче иртеççĕ. Сыпай шкулĕнче акă пуçламăш классен вĕрентекенĕ Э. Шишкина «Манăн интерессен тĕнчи» курав хатĕрленĕ. Çакна курса ачасем те хăйсем валли килĕшекен ĕç тупса унпа хавхаланччăр тесех тăрăшнă ĕнтĕ вăл.

Çак акци вăхăтĕнче психологсем те ачасемпе ытларах тĕл пулусем иртттереççĕ. Нумай пулмасть диагностикăпа консультаци центрĕнче ĕçлекен педагог-психологсем Л. Верховцевапа Н. Миронова Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи вĕренекенсемпе калаçу ирттернĕ. Вĕсем ачасене тата ашшĕ-амăшĕсене çул çитменнисен психики çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă. Ачана вăл темĕнле пулсан та ашшĕ-амăшĕ юратни, вĕсене валли вăхăт уйăрни кирлех. Çапла пулсан çеç ачасен чун туртнă вырăнĕ тăван кил пулĕ. Ăна вĕсем нимĕнпе те улăштармĕç, сехечĕ-сехечĕпе те урамсем тăрăх çухалса çӳремĕç. Нумай чух ашшĕ-амăшĕсенчен «хамăрăн ачапа хамăра епле тытмаллине хамăрах пĕлетпĕр» тенине илтме пулать, анчах психолог канашĕсем вара нихăçан та ытлашши мар. Акци вĕçлениччен кунашкал тĕл пулусем шкулсенче пĕрре мар иртĕç-ха. Çавăнпа ашшĕ-амăшĕсен те активлă пулмалла.

Культура çурчĕсенчи ташă каçĕсенче сывă пурнăç йĕркине сарас тĕллевпе вара çамрăксем хушшинче информаци листовкисене салатаççĕ, çак тематикăпа конкурссемпе викторинăсем те иртеççĕ. Çапла октябрĕн 18-мĕшĕнче çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен комисси членĕсем тата шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем çакăр Культура çуртĕнче рейдпа пулнă. Йĕркене пăсни ниçта та пулман. Çамрăксем вăхăта усăллă ирттерччĕр тесех Культура çурчĕсенче кружоксем ĕçлеççĕ. Сăмахран, Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи Культура çуртĕнче эстрада юррисен коллективĕ тăтăшах репетицисем ирттерет. Музыка инструменчĕсемпе те аван выляççĕ яшсем. Çапса каламалли инструментсене вара Мускавран илсе килме май тупнă кунта. Ĕмĕте пурнăçлас текенсем малаллах туртăнаççĕ çав. Çыннăн пушă вăхăт усăллă иртет пулсан пуçа кирлĕ мар шухăшсем пырса кĕмеççĕ те.

Сывă пурнăç йĕркине пирĕн, аслисен, ачасене мĕн пĕчĕкренех хăнăхтарса пымалла. Çак шухăша тĕпе хурсах Тыр-пул уявĕнче те ачасем хутшăннипе тĕрлĕ мероприятисем пулчĕç. Нумайăшне Муркашри ача-пăча искусство шкулĕн О.В. Григорьева ертсе пыракан хореографи уйрăмĕн сывлăхпа тата çамрăклăхпа çыхăннă ташшисем кăмăла кайрĕç. Кунта иртнĕ «Салочки-скакалочки», «Кручу, верчу, стройной стать хочу» тата ытти спорт вăййисем те ачасене килĕшни палăрчĕ.

Кĕçех районти шкулсем хушшинче агитспектакльсен конкурсĕ те, «ЗОЖ.ru» ятпа КВН та иртмелле. Çак тата ытти мероприятисене çамрăксем хаваспах хутшăнасса шанас килет. Вĕсем активлă пулсан çеç «Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн» акци усăллă иртĕ. Çак девизпа пурăнассине те çамрăксен хăйсенченех пуçламалла. Сывлăхлă çын яланах ăнăçуллă пулнине манмалла мар.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Октябрĕн 30-мĕшĕ – Политика репрессийĕсенче инкек тӳснисене асăнмалли кун

## Репресси вăхăчĕсем асрах

Иртнĕ кĕçнерни кун Раççей политика репрессийĕсенче инкек тӳснисене асăнчĕ. Шел пулин те, çĕр-шыв историйĕнче çак тискер çулсем пулнă. Вĕсене халăх асĕнчен кăларса пăрахаймăн.

Пирĕн районта та çак хума хăйсем çинче тӳссе ирттернĕ çынсем паян сахал мар. Октябрĕн 30-мĕшĕнче вĕсем район администрацийĕн ларусен пĕчĕк залне пуçтарăнчĕç. Вĕсене малтанах район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева Муркаш районĕ епле аталанса пынипе кĕскен паллаштарчĕ. Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Н. Кузьмин районта паянхи кун тĕлне реабилитациленĕ 69 çын пурăннине пĕлтерчĕ. «Вĕсенчен 60 ватă районти социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă пулăшу илсе тăрать. Чăваш Республикин «Реабилитациленĕ тата политика репрессийĕсенче инкек тӳснисен социаллă хӳтлĕхĕ çинчен» саккуна пурнăçлама 1186,3 пин тенкĕ уйăрнă. Иртнĕ 10 уйăхра уйăхсерен паракан укçана тӳлесе тăма 982,9 пин тенкипе усă курнă. Реабилитацилениcем уйăхсерен илсе тăракан укçа паянхи куна 1630 тенкĕпе танлашать. Унта çак категоринчи ватăсене паракан пур çăмăллăх та кĕрет», – тесе пĕлтерчĕ Анатолий Николаевич. Вăл тĕл пулăва пуçтарăннисене патшалăх çитес çултанпа халĕ паракан çăмăллăхсене укçа çине куçарассине те пĕлтерчĕ.

Ватăсем РФ Пенси Фончĕн Чăваш Республикинчи Муркаш район управленийĕн ертӳçи Е.М. Александрова сăмахĕсене те тимлесе итлерĕç. Пенси укçипе тата ватăсене пăхса тăрассипе çыхăннă ыйтусем çине тулли хуравсем илчĕç.

Муркаш районĕнчи политика репрессийĕсенче инкек тӳснисен ассоциацине ертсе пыракан Н.П. Клементьев Шупашкарта «Возрождение надежды» ятлă хаçат тухса тăнине пĕлтерчĕ. Истори страницисене те реабилитациленĕ çынсем унпа пĕрлех аса илчĕç. Киревсĕр, тискер ĕçсем çулсем кайнă çемĕн те вĕсен асĕнчен тухмаççĕ иккен. Айăплисен шутне чи ăслă та хăюллă çынсене сăлтавсăрах кĕртнине каларĕç. Нумай терт-нуша курма тивнĕ вĕсен. Çапла пĕрле пухăнса ватăсем чунĕсене уçрĕç. Ю. Жуков ертсе пыракан пултарулăх ушкăнĕ вара вĕсене илемлĕ юрăсемпе савăнтарчĕ. Ватăсем валли çак кун «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ те алăкĕсене уçрĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА**

Милици хроникинчен

## «Вăйлă» упăшкасен арăмĕсем тӳсĕмлĕ ...

Çемьере чашăк-тирĕк шакăртатмасăр пулмасть тесе авалтанпах калаççĕ. Ку тĕрĕсех ĕнтĕ. Анчах çак хатĕрсем час-часах тата вăйлăрах шакăртатсан та пирĕн чăваш хĕрарăмĕсем (тĕнчери чи тӳсĕмлисем пулĕ) шăл çыртсах малалла пурăнаççĕ. Çитменнине тата хăшĕсем хăйсен хĕрĕсене те чăтăмлă пулмаллине мĕн ачаранах тимлесех вĕрентнĕ пулас. Упăшка хĕнет пулсан та ĕмĕр тăршшĕпех чăтмалла-ши вара?

Мăн Шаптакри пĕр çамрăк хĕрарăмăн та упăшкин киревсĕр ĕçĕшĕнех больницăна лекмелле пулса тухать. Юратнă упăшки ăна пуç мимин чĕтренĕвĕ тата пуçра хупă суран пуличченех стена çине тĕксе янă. Арçын вара вăйлă çеç мар, «ăслă» та пулнă иккен: пур çемье пуçĕ кун пек тума тăн та çитереес çук. Анчах та хĕрарăм ыйтнипе упăшкине халĕ никам та айăпламĕ. Тепре чашăк-тирĕк шакăртатиччен.

## Кредит илме çăмăл, тӳлесси вара...

Кредитпа илнĕ пысăк укçапа алла кĕрсен темĕн тума та пулать. Тĕллевлĕ усă кур та, банка парăма вăхăтра тӳлесе пыр çеç. Калаçмалăх ĕçĕ те çук темелле. Анчах Муркашра пурăнакан пĕр хĕрарăм банкран укça кивçен илсе поручительсен ячĕсене варалама та ĕлкĕрнĕ. Апрель уйăхĕнчен тытăнса хăйхин укçа пĕтсе çитет. Анчах çак сăлтавпа вăл пуçне ытлашши çĕмĕрмест. Поручительсем уншăн тӳлеме пултарни ку ултавçăна канлĕ пурăнтарать пулас. Вĕренĕн вара вĕçĕ пулатех.

## Темĕнле çын та çӳрет çул çинче

Акаки, Заза – çак ятсем пирĕншĕн питĕ ют. Хушамачĕсене каланă чух вара чĕлхе те хуçăлĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Грузи çамрăкĕсем. Шăпах çаксене тытса чарнă та Муркаш районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем. Ку йĕкĕтсен Раççейре пурăнма ирĕк паракан нимĕнле документ та пулман. Апла пулин те вĕсем ултавлă майсемпе пирĕн тăрăха çитме пултарнă. Пур «хăнана» та чăвашсен ырă йăлипе – çăкăр-тăварпа кĕтсе илмелле мар иккен, асăрханулăрах пулмалла.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**




Продается конная телега на резиновом ходу.
Тел.: 8-927-846-36-86.

Куплю дом с участком земли в д. Ильинка Моргаушского района или участок под застройку. Рассмотрю все предложения.
Тел.: 8-902-287-01-59, Олег.

Продается автомашина «Лада-99», цвет темно-серый, 1993 года выпуска, в нормальном состоянии.
Тел.: 8-905-341-64-28.

Продаю: компьютер «Пентиум 2», плуг на МТЗ, конные грабли, сегментную косилку, навесную картофелесажалку, косилку Л-501.
Тел.: 8-905-341-45-24, 8-919-650-51-93.

## Пĕлтерӳсем. Объявления



ЗАКУПАЕМ ПО ДОРОГИМ ЦЕНАМ:
- упитанных быков, телок, коров.
Тел.: 60-6-62, 8-960-305-15-97, 8-937-377-54-94. 1-2.

ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат). 1-5.

Халăхран лайăх хакпа ĕне, тына, вăкăр ашăн тата чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 2-4.

Хаклă тăвансем!
2008 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕнче, Солунь хулинче нумай асап тӳснĕ Димитрия асăннă кун, Турай ялĕнчи чиркӳ çине хĕрес хăпартаççĕ.
Кĕлĕ 10 сехетре пуçланать.
Ыйтса пĕлмелли телефон: 8-927-843-24-10.
Федор атте.
2-2. Прихут канашĕ.

Калайкасинский «Строительный двор» реализует следующие стройматериалы: доски хвойные, березовые и липовые; жерди 6 м - 130 руб.; срубы на заказ всех размеров с полной сборкой «под ключ», имеются в наличии хвойные и березовые размером 3мх3м.
Банные печи на заказ.
Тел.: 8-903-063-24-89, 8-906-387-86-46, 37-60-61. 5-5.

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.
Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 4-13.

Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием.
Тел.: 8-905-345-77-19. 4-10.

Индивидуальному предпринимателю Вязову Андрею Николаевичу требуется маляр мебельного производства. Зарплата высокая. Звонить по тел.: 2-25-74 с 8.00 до 17.00. 2-2.

Спутниковое телевидение от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95.
Спутниковый интернет. 2-20.

МИР окон и дверей
29-80-60
ОКНА пластиковые
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
от ведущего производителя Чувашии теперь... в МОРГАУШАХ
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
8-927-669-80-60
Набор по уходу за окнами и москитная сетка – в подарок! Скидка до 25 %.

Продаю кирпич: красный одинарный М-100, М-125, М-150, красный полуторный пустотный М-125, силикатный, КББ 20х20х40, керамзит, гравмассу, кирпич половняк. Доставка. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97. 1-9.

6 декабря 2008 года в Доме культуры с. Акрамово состоится собрание долевиков. Начало в 10-00 часов.
За информацией обращаться по тел.: 63-2-48.

Продаю двухкомнатную благоустроенную квартиру в центре с. Моргауши. Тел.: 8-927-994-19-67.

Продаем с доставкой ячмень, отруби.
Тел.: 8-919-679-96-97. 1-3.

Сдаются складские помещения и открытые площадки в аренду. Обращаться в «Моргаушскагропромснаб» или по тел.: 2-18-11.

Продается корова черно-пестрая, отел 30 мая.
Тел.: 8-917-653-87-04.

Участница долевой собственности Илларионова Елена Михайловна, 07.07.1973 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. Ленина, д. 49, кв. 48, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК им. Ильича, расположенного в поле № 2, полевой севооборот № 2, участок № 2 площадью 1,13 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Александровского сельского поселения.
2. Илларионовой Елене Михайловне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. Ленина, д. 49, кв. 48.

## Тав тăватпăр

Пирĕн хаклăран та хаклă мăшăра, аннене, хунямана, кукамая, Сыпай ялĕнче пурăннă Людмила Дмитриевна Шишкинана юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн кӳршĕсене, çывăх çынсене пысăк тав.

**Мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**

«Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ» муниципаллă учреждени коллективĕ кунта инструктор пулса ĕçлекен О.В. Лоцмановăн тăван пиччĕшĕ тата Муркашри ача-пăча искусство шкулĕн коллективĕ кунта преподаватель пулса ĕçлекен М.А. Лоцмановăн упăшки

**Виталий Валерианович ЛОЦМАНОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

**Хаçатăн çитес номерĕ ноябрĕн 8-мĕшĕнче тухать.**

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Шапошников В.Л.
Номер подписан 31.10.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.